МИНИСТЕРСТВО ПРОСВЕЩЕНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
Министерство образования и молодежной политики Чувашской Республики
Администрации Аликовского муниципального округа
МАОУ "Яндобинская СОШ" Аликовского муниципального округа"

| РАССМОТРЕНО | СОГЛАСОВАНО | УТВЕРЖДЕНО |
| --- | --- | --- |
| Руководитель ШМО | Заместитель директора по УВР | Директор |
| ______________________ Медведева Н.З. | ______________________ Григорьева Л.А. | ______________________ Кондратьев А.П. |
| Протокол №1 от «28» августа 2023 г. | Протокол №1 от «29» августа 2023 г. | Приказ №1 от «1» сентября 2023 г. |

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**учебного предмета «Родной язык (чувашский) и или государственный язык республики Российской Федерации»**

для обучающихся 1-4 классов

с. Яндоба 2023

**1. «Чӑваш челхи» предметӑн пайрам результачӗсем**

***Харкамлӑх результачӗсем:***

- тӑван чӗлхене хаклама, хисеплеме хӑнӑхса пыни;
- кашни халӑхӑн хӑйӗн чӗлхи пулнине, вӑл ыттисенчен уйрӑлса тӑнине ӑнланни;
- чӗлхепе кӑсӑкланма пуҫлани, харпӑр хӑй пуплевне лайӑхлатас кӑмӑл-туйӑм амаланни.

***Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем:***

- пулӑмсене тарӑнрах ӑнланма вӗренсе пыни;
- ӑнлавсене уҫӑмлама, ушкӑнлама хӑнӑхса пыни;
- тишкерӳ-пӗтӗҫтерӳ, танлаштару хӑнӑхӑвӗсем ҫирӗпленсе пыни.

***Предметӑн пайрам результачӗсем:***

- ачасем алфавитри сас паллисене, вӗсен пӗлтерӗшӗсене, уҫӑ тата хупӑ сасӑсен уйрӑмлӑхӗсене, сӑмахри уҫӑ сасӑ ҫине пусӑм ӳкни-ӳкменнине, сасӑсем хытӑ тата ҫемҫе пулнине, сӑмахсене пӗр йӗркерен теприне мӗнле куҫармаллине пӗлни;
- 35-40 сӑмахлӑ текста каллиграфи тӗлӗшӗнчен тӗрӗс те таса, сас паллисене сиктерсе хӑвармасӑр, пӑтраштармасӑр пӑхса ҫырма пултарни;
- 25-30 сӑмахлӑ текста итленипе (диктант) ҫырма вӗренсе пыни;
- сӑмаха сыпӑклама, пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене тӗрӗс куҫарма, ҫемҫе хупӑ сасӑсене ҫырура тӗрӗс палӑртма, вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене (программӑра кӑтартнисене) тӗрӗс ҫырни;ҫын ячӗпе хушаматне, ашшӗ ятне, выльӑхсемпе чӗр чунсен уйрӑм ячӗсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячӗсене пысӑк сас паллипе пуҫласа ҫырма пултарни;
- сӑмахсен сасӑ тытӑмне тишкерме (вӗсене сыпӑклама, уҫӑ тата хупӑ сасӑсене, сасӑсемпе сас паллисен йӗркине тата хисепне палӑртма) пӗлни;
- япалана, унӑн ӗҫне, паллине пӗлтерекен сӑмахсене ыйтӑвӗ тӑрӑх ушкӑнлама пултарни;
- предложении тӗп членӗсене - подлежащипе сказуемӑя - тупма пӗлни;
- ыйтусем тӑрӑх ансат предложени членӗсем хушшинчи ҫыхӑнӑва палӑртма вӗренни;
- предложение пысӑк сас паллирен пуҫласа ҫырма, ун вӗҫне, интонацие кура, пӑнчӑ, ыйту е кӑшкӑру палли лартма пӗлни;
- 15-20 сӑмахлӑ текст тӑрӑх ыйтусене хуравласа изложени ҫырма; 2-3 предложениллӗ текст тума пултарни.

**1 класс**

**«Чӑваш челхи» предметӑн результачӗсем:**

**Вӗренекен пӗлу илет:**

- тӑван чӗлхери тӗп сасӑсене, вӗсене палӑртмалли сас паллисене, сӑмахри сасӑсен **пахалӑхне (уҫӑ е хупӑ), йӗркине, хытӑ тата ҫемҫе сасӑсене сӑмахра паллама, ҫырура** палӑртма пӗлни;

- сӑмахсене, предложенисене, пысӑк мар тӗрлӗ жанрлӑ текст- сене вуласа ӑнланма пултарни;

- пур сасӑ пуххи сӑмах, сӑмах пуххи предложени пулайманнине ӑнланни;

- сас паллисене (пӗчӗккисене тата пысӑккисене), вӗсен ҫыхӑ- нӑвӗсене, сӑмахсене, предложенисене тӗрӗс евӗрлесе ҫырса илме, тӗрӗслеме вӗренни;

- уйрӑм сӑмахсене, 3-4 сӑмахран тӑракан, тытӑмӗпе ансат предложенисене илтнӗ тӑрӑх ҫырма пултарни;

- чӗлхе пӗлӗвӗн хӑш-пӗр ансат ӑнлавӗсемпе терминӗсене (уҫӑ е хупӑ сасӑ, сас палли, сыпӑк, сӑмах, предложени, текст) уҫӑмлани.

**Вӗренекенӗн пӗлу илме май пулать:**

- ачасем алфавитри сас паллисене, вĕсен пĕлтерĕшĕсене, уçă тата хупă сасăсен уйрăмлăхĕсене, сăмахри уçă сасă çине пусăм ӳкни-ӳкменнине, сасăсем хытă тата 15-20 сăмахлă текста каллиграфи тĕлĕшĕнчен тĕрĕс те таса, сас паллисене сиктерсе хăвармасăр, пăтраштармасăр пăхса çырма пултарни;
- сăмаха сыпăклама, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс куçарма, çемçе хупă сасăсене çырура тĕрĕс палăртма, вăрăм хупă сасăллă сăмахсене (программăра кăтартнисене) тĕрĕс çырни;çын ячĕпе хушаматне, ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллипе пуçласа çырма пултарни;
- сăмахсен сасă тытăмне тишкерме (вĕсене сыпăклама, уçă тата хупă сасăсене, сасăсемпе сас паллисен йĕркине тата хисепне палăртма) пĕлни;
- япалана, унăн ĕçне, паллине пĕлтерекен сăмахсене ыйтăвĕ тăрăх ушкăнлама пултарни;
- предложении тĕп членĕсене - подлежащипе сказуемăя - тупма пĕлни;
- ыйтусем тăрăх ансат предложени членĕсем хушшинчи çыхăнăва палăртма вĕренни;
- предложение пысăк сас паллирен пуçласа çырма, ун вĕçне, интонацие кура, пăнчă, ыйту е кăшкăру палли лартма пĕлни;
- 2-3 предложениллĕ текст тума пултарни.

**2 класс**

**«Чăваш чĕлхи» предметăн результачĕсем:**

**Вĕренекен пĕлӳ илет:**

- тĕрлĕ хайлав тишкернĕ май хăйсен тата ыттисен ĕç-хĕлне сăнама, хаклама хăнăхма пуçлани;
- вуласа е итлесе пĕлнĕ информацие аса хывма, асăмлама вĕренсе пыни;
- мăшăршарăн, ушкăнпа пĕрле ĕçлеме – хăйсем хушшинче рольсемпе ĕçсене уйăрма, пĕрлĕхлĕ ĕçĕн харкам пайне пурнăçлама вĕренме пуçлани.

**Вĕренекенĕн пĕлӳ илме май пулать:**

- вулав пахалăхĕсем çирĕпленни, вулав тĕсĕсемпе мелĕсене алла илсе пыни;
- сасăллă пуплевĕн пĕлтерĕшлĕ мелĕсене (хăвăртлăхĕ, янăравлăхĕ, кĕвĕлĕхĕ) кирлĕ пек улăштарма вĕренни;
- текст тишкерĕвне малалла вĕренсе пыни;
- ансат жанрсене (юмах, калав, сăвă) пĕр-пĕринчен уйăрса илме пултарни;
- хăш-пĕр илемлĕх мелĕсене (танлаштару, эпитет, метафора) курма-сăнама тытăнни;
- литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе паллашни.

**3 класс**

**«Чăваш чĕлхи» предметăн результачĕсем:**

**Вĕренекен пĕлу илет:**

- ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси:
- çĕнĕ терминсемпе паллаштарасси, вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси;
- тĕрлĕ  енлĕ тишкерӳ вĕрентесси;
- капăшсене пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăхтарасси;
- ачасен вĕтĕ моторикине аталантарасси.

**Вĕренекенĕнпĕлу илме май пулать:**

- ачасене шкул пурнăçне, йĕркесене, вĕренекен яваплăхĕсене ăнланма, ăша хывма, пурнăçласа пыма пулăшасси;
- пĕр-пĕринпе, аслисемпе кăмăллăн хутшăнма вĕренсе пырасси;
- хутшăну тата пуплев этикетне малалла тăсасси;
- *«çемье»: «йăх»: «ял-йыш»* ăнлавсене уçăмлама, ăса хума пулăшасси.

***Вĕренекен пĕлу илет:***

- вĕреннĕ пуплев пайĕсем, вĕсен паллисем, предложении пĕр йышши членĕсем ҫинчен ҫирĕп пĕлни;
- вĕреннĕ орфограммăсенчен тăракан 55-60 сăмахлă текста йăнăшсăр, таса та илемлĕ ҫырса илме, диктант ҫырма пултарни;
- пĕр йышши членлă предложенире (вĕреннĕ тĕслĕхсем) чарăну паллисем лартма вĕренни;
- сăмахăн сасăпа сас палли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма хăнăхни;

***Вĕренекенĕн пĕлӳ илме май пур***

- япала ячĕсен, сăпат ылмашĕсен падежĕпе хисепне, глаголсен хисепне, сăпачĕпе вăхăтне палăртма пултарма;
- предложении ансат синтаксис тытăмне чухлама: вăл тĕллевпе интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнлине калама, унăн тĕп членĕсемпе кĕҫĕн членĕсене тупма, ыйтусем тăрăх вĕсен ҫыхăнăвне тата пĕр йышши членсене асăрхама хăнăхса пыма;
- харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса 80-90 сăмахлă текст тăрăх изложени ҫырма, пурнăҫра пулни-иртни, экскурсире курни, сăнани ҫинчен ҫыхăнуллă пĕчĕк калав йĕркелеме (сочинени ҫырма) вĕренсе пыма.

## 2. «Чăваш челхи» предметăн шалашĕ
## 1 класс

- **Раздел 1.Умĕнхи тапхăрти уроксем**
- Хăнăхтарусем пурнăҫланă май терминсемпе (пуплев, текст, калав, предложени, сăмах, сыпăк, пусăм, уҫă сасă, хупă сасă) паллаштарасси, вĕсемпе вĕренӳре усă курма хăнăхтарасси.
- **Пуплев** (калупа ҫыру) ҫинчен пĕтĕмĕшле ăнлав парасси.
- **Предложени тата сăмах.** Пуплеври (текстри) предложенисене, предложенири сăмахсене уйăрса илесси, вĕсене фишкăсемпе усă курса палăртасси. Предложени сăмахсенчен тăни. Предложении пуҫламăшĕ тата вĕҫĕ. Чарăну паллисем (пăнчă, хӳреллĕ пăнчă, ыйту палли, кăшкăру палли), вĕсен ячĕсемпе паллаштарасси.
- Сăмах сасăсенчен тăни, унăн пĕлтерĕшĕ пурри.
- **Сыпăк, пусăм.** Сăмахсене сыпăкăн пайласси (сыпăкласси). Сăмахсенче сыпăксен шутне, йĕркине палăртасси. Пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене асăрхасси, сăмаха тĕрĕс пусăмласа (пусăм ӳкекен сыпăка тăсарах, вăйлăрах) каласси.
- **Сасă.**Пĕтĕмĕшле ăнлантарасси. Сăмахри сасăсене уйăрасси, фишкăсемпе усă курса вĕсен хисепне, йĕркине палăртасси.
- Каланă сасăллă сăмаха ыттисем хушшинче палласси, хатĕр схемăна тивĕҫтерекен, пĕр-пĕр сасăран е сыпăкран пуҫланакан сăмахсене аса илесси. Уҫă тата хупă сасăсене илтесси, пĕр- пĕринчен уйăрса илесси.
- **Ҫыру хăнăхăвесем.** Ҫырнă чух тĕрĕс ларма, тетраде кирлĕ пек хума, кăранташпа ручкăна меллĕн тытма, ӳкерчĕксем тунă е ҫырнă чух вĕсемпе тĕрĕс усă курма вĕрентесси.
- Пирĕн ҫырăвăн хăй евĕрлĕхĕ: эпир ытти чылай халăх пек сула- хайран сылтăмалла йĕркен-йĕркен ҫӳлтен аялалла ҫыратпăр.
- ***Ҫырулăхра усă куракан хăш-пĕр капăшсен ячĕсемпе паллашта- расси:*** виҫ кĕтеслĕх, тур кĕтеслĕх, ҫаврашка, ункă, ҫур ункă, пĕкĕ, ҫекĕл, лапчăкункă.
- Калĕпăша пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăх- тарасси. Пайсем тăрăх капăшне тавҫăрасси, пайсенчен капăш пуҫ- тарасси, капăшри ҫитмен пайсене ăнкарасси.

- Капăшсене куҫ виҫипе танлаштарасси, вĕсем хăш пайĕсемпе пĕр пеккине е пĕр-пĕринчен уйрăлса тăнине асăрхама хăнăхтарасси. Лап выртакан (горизонтальная), чăнкă анакан (вертикальная) йĕрсемпе паллаштарасси, вĕсене тетрадьре тупасси. Хăш-пĕр йĕрсен ячĕсемпе паллаштарасси: **чалăш йĕр** (косая линия), **кукăр йĕр** (кривая линия) т.ыт.те.
- Тĕрлĕ йĕре, капăшсене, эрешсене, сас паллисен пайĕсене сыв- лăшра евĕрлесси, йĕрлесси. Ҫырса пĕтермен йĕрсемпе капăшсене вĕҫлесси, сăрласси.
- **Уҫлăх енесем: сылтăм, сулахай, ум, хыҫ, аял, ҫӳл, мал, кай, ҫум.** Япаласен, капăшсен уҫлăхри вырăнне курма, сăмахпа палăрт- ма пĕлесси.
- **Итлев тата калу хăнăхăвесем.** Аслисем, тантăшĕсем каланине, вуланине итлеме-илтме хăнăхтарасси: итлеме хатĕрленесси, малтан пуҫласа вĕҫне ҫитиччен пӳлмесĕр, каланине ăш пиллĕн йышăнса итлесси. Илтнине ăнланма, астуса юлма тăрăшасси.
- **Ҫыхăнуллă каласа пама, текст калăплама верентесси.** Текст теми, сюжечĕ - ĕҫ мĕнле пуҫланать, мĕн хыҫҫăн мĕн пулса иртет, мĕнле вĕҫленет. Сăмах кам е мĕн ҫинчен пырать.
- Итлеме, ҫыхăнуллă каласа пама вĕрентнĕ май ачасен сăмах йышне пуянлатасси, сăмахсен пĕлтерĕшне тĕрĕсрех, тарăнрах чухлама, вĕсен грамматика формисене тума, пуплевре вĕсемпе вырăнлă усă курма, тĕрлĕ тытăмлă предложенисене кĕртсе вĕсене пĕр-пĕринпе ҫыхăнтарма хăнăхтарасси.
- **Раздел 2.Сас палли тапхăрĕнчи уроксем**
- Тăван чĕлхери тĕп сасăсем, вĕсене уйăрасси, ҫырура палăр- тасси. Кĕнекере тата ал ҫырăвĕнче усă куракан сас паллисем, вĕсен пĕлтерĕшĕсем.
- Вĕреннĕ сас паллисене тĕрĕс ҫырма, ҫырура пĕр-пĕринпе ҫыхăнтарма, тĕрлĕ йышши - уҫă, тӳнтер, тӳрĕ сыпăкра, сăмахра, предложенире вулама хăнăхтарасси.
- Хытă уҫă тата хытă хупă сасăсем. Аа, Уу, Аă, Нн, Лл, Мм, Тт, Пп, Шш, Рр, Ыы, Вв, Хх сас паллисем. Вĕсене ҫырасси, хытă сыпăкра, сăмахра вуласси. Тӳнтер тата тӳрĕ сыпăксене вулас вăрттăнлăх.
- Ҫемҫе уҫă тата хупă сасăсем. Ии, Ее [э], Ĕĕ, Сс, Кк, Ӳӳ, Ҫҫ, Чч сас паллисем, вĕсене ҫырасси. Позициллĕ вулав. Хытă, ҫемҫе сыпăксем, сăмахсем. Хупă сасса палăртакан сас паллин пĕлтерĕшĕ вăл мĕнле сыпăкра тăнинчен килни. Хытăлăх/ҫемҫелĕх енчен мăшăрлă сыпăксене, сăмахсене танлаштарса вуласси, сас палли- сенчен пухасси, пичетлесси.
- Ҫемҫелĕх палли (ь). Хутăш сыпăксем, сăмахсем. Ҫемҫе хупă сасăсене палăртмалли мелсене сăнасси.
- Тăван чĕлхери [й] сасă, ăна уйăрасси, палăртасси. Йй сас палли- сем. Юю, Яя, Аă сас паллисем сыпăка та, пĕр сасса та пĕлтерни.
- Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче тĕл пулакан сасăсем, вĕсене уйăрасси, тĕрĕс каласси. Оо, Аă, Бб, Гг, Дд, Зз, Жж, Фф, Цц, Щщ сас паллисем, уйăракан паллăсем (ь, ъ).
- Сăмахсене тăстарса, сыпăксене сыпăнтарса вулама вĕрентесси.
- Сасă тишкерĕвĕ тунă сăмахсене хатĕр сас паллисемпе сыпăк- сенчен пухасси, класс хăми ҫине пичетлесси, вуласси, евĕрлесе ҫырасси.
- Уйрăм сăмахсене, ансат предложенисене тата пысăках мар текстсене тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕс (йывăр сăмахсене сыпăкăн пайласа), тĕрĕс пусăмласа вуласси, вуланине ăнланасси, ыйтусене хуравласси. Вулав хăвăртлăхĕ - минутра 12-15 сăмах.

- Вуланӑ чухне предложенисем тата предложенири пӗр йышши членсем хушшинче чарӑну тӑвасси. Предложение, вӗҫӗнчи чарӑну паллине кура, тивӗҫлӗ интонаципе вуласси.
- Ал ҫырӑвӗнчен, пичетленӗ текстран сӑмахсем, предложенисем (малтан - вӗсене сасӑ тата сас палли тишкерӗвӗ тунӑ хыҫҫӑн, кай- ран - харпӑр хӑй тӗллӗн) ҫырса илесси. Ҫырнине кӗнеке е класс хӑми ҫинчи текстпа танлаштарса, сыпӑкӑн-сыпӑкӑн вуласа тӗрӗс- лесси.
- Ансат сӑмахсене, 2-3 сӑмахран тӑракан предложенисене каланӑ тӑрӑх ҫырасси.
- Предложени пуҫламӑшӗнчи сӑмаха, ҫын ячӗпе хушаматне пысӑкран пуҫласа ҫырасси. Предложени вӗҫне чарӑну палли лар- тасси.
- Ҫыру гигиенин правилисене пӗлесси.
- **Пуплевен сасӑ культури.** Харпӑр хӑйӗн тата урӑх ҫыннӑн пуплевне тимлеме, итленине асӑмлама хӑнӑхтарасси. Калаҫу хӑнӑхӑвӗсене лайӑхлатасси: васкамасӑр, ирӗккӗн (тытӑнчӑксӑр, пӳлӗнсе тӑмасӑр), вӑтам хӑвӑртлӑхпа, сасӑ хӑпартмасӑр, уҫӑмлӑн калаҫма, калаҫнӑ май тӗрӗс сывлӑш ҫавӑрма, интонаци кирлӗ пек улӑштарма вӗрентесси.
- Пуплеври сасӑсене илтес, калас пултарулӑха лайӑхлатасси: тӑван чӗлхери тӗп сасӑсене уйӑрма, вӗсене уйрӑмшарӑн тата пуплевре тӗрӗс каламалли (орфоэпи) виҫесене пӑхӑнса калама хӑнӑхтарасси.
- Пуплеври сасӑсене тӗрӗс илтме, сӑмахсене, вӗсен майлашӑвӗ- семпе предложенисене ҫӑмӑллӑн ӑнкарма, шухӑша хӑвӑрт ӑнланма хӑнӑхтарасси. Уйрӑм ачасен пуплев кӑлтӑкӗсене юсасси.
- **Сӑмах.** Вӗренекенсем усӑ куракан сӑмах йышне ӳстересси. Япаласемпе пулӑмсен ячӗсене, вӗсен паллине, ӗҫне пӗлтерекен сӑмахсене литература чӗлхинчи пек калама вӗрентесси.
- Япаласене вӗсен тӗп паллисем тӑрӑх ушкӑнлама, пӗр-пӗринчен уйӑрса илме, япала ушкӑнне пӗр сӑмахпа пӗтӗмлетме (ят пама) хӑнӑхтарасси.
- Сӑмах пӗлтерӗшне тӗплӗнрех ӑнланасси. Сӑмахсен пулӑв ҫыхӑнӑвӗсене асӑрхаса ӑнкарасси.
- Шухӑша тӗрӗс уҫса пама кирлӗ сӑмаха хӑвӑрт тупма, ӑна ытти сӑмахсемпе тӗрӗс ҫыхӑнтарма, сӑмахсен грамматикаформисемпе вырӑнлӑ усӑ курма, пӗр шухӑша тӗрлӗ майпа палӑртма вӗрентесси.
- Ансат тӗслӗхсемпе усӑ курса сӑмах нумай пӗлтерӗшлӗ пул- ма пултарнипе, омонимсемпе тата синонимсемпе (терминӗсене асӑнмасӑр) паллаштарасси.
- Вырӑнти калаҫупа литература чӗлхин уйрӑмлӑхӗсене уяма хистесси.
- Сӑмахсен грамматика формисемпе усӑ курасси. Литература чӗлхинче йышӑннӑ грамматика формисене ӑнланма, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси. Ҫав шутра: япала ячӗсен, местоименисен падеж тата хисеп формисем, глаголӑн ытларах тӗл пулакан (хальхи, пӗрре иртнӗ, пулас) вӑхӑт формисем, вӗсен хирӗҫлев, пултараслӑх/ пултараймаслӑх аспекчӗсем (терминсене асӑнмасӑр).
- **Сӑмах майлашӑве.** Япалан камӑнлӑхне палӑртасси. Тӑванлӑх терминӗсен сӑпат формисем. «Сӑпат ылмашӗ е тулли пӗлтерӗшлӗ япала ячӗ + пулӑшу пӗлтерӗшлӗ япала ячӗ» калӑплӑ сӑмах майла- шӑвӗсен тӑтӑшлӑ ӳкӗм формисемпе **(манӑн патӑмра, санӑн па- тӑнта** т.ыт.те) пуплевре усӑ курасси.
- **Предложени.** Тытӑмӗпе (хутсӑр, хутлӑ) тата калас тӗллевне кура (калуллӑ, ыйтуллӑ, хистевлӗ) тӗрлӗ предложени калӑпласси. Пуҫланӑ предложенисене вӗҫлеме, ансӑррисене анлӑлатма пӗлесси. Пӗр шухӑшах тӗрлӗ предложенипе е вӗсен ҫыххипе

палăртасси. Предложенири сăмахсен йĕркине сăнама, вĕсене тĕрĕс çыхăнтарма хăнăхтарасси.

- **Çыхăнуллă пуплев.** Пуплев хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси: тимлесе итлеме, асăмлама, çыхăнуллă каласа пама, вĕрен- текен ыйтăвĕсене тĕрĕс, усăмлăн хуравлама, пуплевре предложении тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма хăнăхтарасси. Итленĕ е вуланă калавсем, юмахсем тăрăх хăйсен шухăшне каласа пама вĕрентесси.
- Тăван литература чĕлхине ăнланма, унăн фонетика системипе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма, курни-илтни çинчен çыхăнуллă каласа пама вĕрентесси. Юлташĕсен хуравĕсене, каласа панине ырă кăмăлпа итлеме-тимлеме хăнăхтарасси.
- Калавсемпе юмахсем, диалогсем, сăвăсем итлесси-тăнласси, асăмласси (учитель вуласа е каласа панине, магнитофон ленти çине çырса илнине, ача-пăча валли хатĕрленĕ теле-тата радиокă- ларăмсене).
- Пысăках мар юмахсемпе калавсене аса илесси, вĕсене уйрăм пайсене пăтраштармасăр, сиктерсе хăвармасăр каласа парасси (хăйсем тĕллĕн е вĕрентўçĕн ыйтăвĕсем тăрăх).
- Вуланă предложенисем, текстсем тăрăх ыйтсан хуравлама, текста, унăн уйрăм пайĕсене ят пама пĕлесси.
- Уйрăм темăпа çыхăннă темиçе ўкерчĕк тăрăх предложенисем, çыхăнуллă пĕчĕк калавсем тăвасси.
- Пуçланă калава вĕçлесси, вĕçне илтнипе калавăн пуçламăшне шутласа тупасси. Пулни-иртни çинчен вуланипе пĕр евĕрлĕрех каласа парасси.
- Çут çанталăкри улшăнусем çинчен, экскурсире, библиотекăра, ытти обществăлла вырăнта курни-илтни çинчен çыхăнуллă калама хăнăхтарасси.
- **Раздел 3. Букварь хыççăнхи вулав урокĕсем**
- Ачасем урокра мĕн вуламаллине палăртасси вĕрентўпе аталантару, сапăрлăх тĕллевĕсене пурнăçлассипе, вĕсен тĕнче курăмне, тĕнче йышăнăвне йĕркелессипе çыхăннă.
- **Вулав карти:** вăхăт, кунпа çĕр улшăнăвĕ, çулталăк вăхăчĕсем, Тăван çĕр-шыв, тăван республика, тăван ял, Тăван çĕр-шывăн чыслă сумлă çыннисем, ача тата унăн тусĕсем, çут çанталăк, çут çанталăкри пулăмсем, чăваш халăх сăмăхлăхĕ, тĕрлĕ халăх юмахĕсем, И.Я.Яковлев, К.В.Иванов, Н.И.Шелепи хайлавĕсем.
- **Пăхмасăр калама вĕрентесси:** вĕреннĕ 4-5 сăвва пăхмасăр каласси.
- **Вулав хăнăхăвĕсем.**Вĕрентўçĕ тата ытти ачасем каланине (вуланине) тимлĕн итлес-тăнлас, ăнланса асăмлас хăнăхусене лайăхлатасси. Пысăк мар текста тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕс, сыпăкăн тăсса вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ (палламан текста вуласси) - пĕр минутра 15-20 сăмах. Предложени вĕçĕнче, пĕр йышши членсем хушшинче чарăну тăвасси.
- Диалоглă текстсене сасса кирлĕ пек улăштарса вуласси. Вулавăн тĕрлĕ тĕсĕсене (саспа, çурма саспа, шăппăн, пăшăлтатса) вĕренсе пырасси.
- **Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.** Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси; вуланă текстăн шалăшне (со- держанине) ўкерчĕксем тăрăх аса илесси; ятсăр текста ят парасси, текстăн ячĕ мĕншĕн çаплине ăнкарасси (вĕрентўçĕ пулăшнипе). Вуланине пĕтĕмĕшле хак парасси. Укерчĕксем тăрăх çыхăнуллă калав йĕркелесси (çырмасăр).
- Маларах вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси. Сăмаха сыпăкласси, пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси.

- Ҫырас ăсталăха лайăхлатасси. Сас паллисен ӗлкине тӗрӗс тă- вас, вӗсене пӗр-пӗринпе ҫыхăнтарас хăнăхăва ҫирӗплетесси. Сас паллисене, сыпăксене, сăмахсене тата кӗске предложенисене пӗр хăвăртлăхпа (харăс, шутласа) ҫырасси. Ҫыру гигиенине ҫирӗп уяма хăнăхтарасси.
- Сăмах мӗнле сасăсенчен тăнине, вӗсене ҫырура хăш сас паллисемпе палăртмаллине чухлама, сиктерсе хăварнă сас паллисене тавҫăрма, пăтраштарнă сыпăксенчен сăмахсем, сăмахсенчен пред- ложенисем йӗркелесе ҫырма вӗрентесси.
- Пысăках мар текста кӗнеке е класс хăми ҫинчен пăхса ҫырма, ҫырнине тӗрӗслеме хăнăхтарасси.
- Предложенисене, пысăках мар (2-3 кӗске предложенирен тăракан) текста итлесе е вуласа ҫырасси.
- Пӗр-пӗр темăпа (тӗслӗхрен, ашшӗ-амăшӗ, шкул, ачасен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен), ӳкерчӗке сăнаса, ӳкерчӗксен серийӗсем тăрăх, пурнăҫра курни-илтнине аса илсе вӗрентекен ыйтăвӗсемпе кăтартăвӗсем ҫине тӗревленсе пысăках мар калавсем тутарасси.
- Вуланине е итленине аса илсе, вӗрентекен пулăшса пынипе ыйтусене хуравласси, ҫыхăнуллăн каласа парасси.

## 2 класс

**Саса тата сас палли**

Предложени, самах, саса, сас палли. Алфавит. Уса сасасемпе хупа сасасем. Хыта уса сасасемпе семсе уса сасасем. Хыта уса самахсенче семселех пали сырасси.Уйаракан семселех пали сырасси. Варам хупа сасса ике пер пек сас паллипе сырса палартни. Вырас челхинчен кене хаш-пер самахсене сырасси. Орфографи словаре. Самах сыпаке. Самахсене пер йеркерен тепер йеркене кусарасси.

**Самах. Япала яче**

Кам? Мен? Ыйтулла самахсем. Пер япалана пелтерекен самахсем. Япала нумайййине пелтерекен самахсем. Сын ячесене.

**Глагол**

Мен тавать? Мен тавассе? ыйтусенчи глаголсем. Мен туре? Мен турес? Ыйтусенчи глаголсем. Хиресле пелтерешле глаголсем. Сывах пелтерешле глаголсем.

**Палла яче**

Япала паллине пелтерекен самахсене менле? Ыйту лартса тупасси. Тесе пелтерекен самахсем. Сынна санлакан самахсем. Хиресле пелтерешле самахсем(антонимсем). Перешкел пелтерешле самахсем(синонимсем)

**Предложени**

Пуплеве предложенисем сине уйарасси. Предложенин теп членесем тата кесен членесем. Предложени членесем хушшинчи сыхану. Калулла, ыйтулла предложенисем. Кашкарулла предложенисем.

**2 - меш класра вереннине петемлетесси.**

Сасасемпе сас паллисем. Алфавит. Япала ячее, глагол , пала ячее синчен вереннине петемлетесси. Орфографи словаре. Синонимсен словаре.

## 3 класс

**Раздел 1: Вӗреннине аса илесси.** 1-мӗш, 2-мӗш классенче вӗреннине аса илесси. Текст. Предложени. Ӳкерчӗк тăрăх калав йӗркелесе çырасси. ĂÇУ №1.

**Раздел 2: Сасă. Сас палли.** Сасă. Сас палли. Вăрăм хупă сасăсене икӗ сас паллипе палăртасси. Вăрăм хупă сасăсене икӗ сас паллипе палăртасси. ТУ №1. Диктант. Авăн уйăхӗ. Ч сасă умӗнчи л, н хупă сасăсен çемçелӗхне ятарласа палăртманни. ĂÇУ №2. Изложени. Пиччӗшӗпе шăллӗ.

Сăпайлăх сăмахĕсем. Ё, ч сас паллисем хыççăн ы е и çырасси. Калав содержанине кĕскен çырасси. Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ сас паллисем çырасси. Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б, г, д, ж, з, ф, ц, щ сас паллисем çырасси. Телефонпа калаçасси. ĂÇУ №3. Изложени. Çăкăр. Э, е, ю, я сас паллисемпе усă курма пĕлесси. ТУ №2. Диктант. Туслăх. ĂÇУ №4. Сочинени. Хура кĕркунне.

**Раздел 3: Предложени**. Предложени. Предложени çинчен мĕн пĕлнине аса илесси. Текст тата предложени. Калуллă предложенисем. ТУ №3. Диктант. Çерçисем. Ыйтуллă предложенисем. Хистевлĕ предложенисем. ĂÇУ №5. Изложени. Ватă тилĕ. Кăшкăрулла предложенисем. Предложенин тĕп членĕсем. Предложенин кĕçĕн членĕсем. Сăмах майлашăвĕ. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ. ТУ №4. Диктант. Кăмпа çумăрĕ. Ансăр тата анлă предложенисем. Ансăр тата анлă предложенисем. Пĕр-пĕр чĕр чуна сăнласа текст çырасси. Предложени çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. Тăванлăх сăмахĕсем. ТУ №5. Çырса илни. Ват асатте уявĕ. ĂÇУ №6. Сочинени. Манăн асатте (асанне).

**Раздел 4: Сăмах.** Сăмах. Сăмах тытăмĕ. Тымар тата аффикссем. Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффиссем. Хăнана чĕнесси. Çĕнĕ сăмахсем -а(-е),-лăх(-лĕх) аффиксскем хушăнса пулни. Çĕнĕ сăмахсем -у(-ÿ),-ла(ле) аффикссем хушăнса пулни. ĂÇУ №7. Изложени. Чаплă утарçă. Пĕр тымартан пулнă сăмахсем. ТУ №6. Диктант. Кăмпара. Аффикслă сăмахсене çырасси. Аффикслă сăмахсене çырасси. Аффикслă сăмахсене çырасси. Заметка çырасси.

**Раздел 5: Пуплев пайесем. Япала ячĕ.** Япала ячĕ. Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăвĕсем. Япала ячĕсем хисеп тăрăх улшăнни. ĂÇУ №8. Изложени. Каюра. Ш, с, ç сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсене нумайлă хисепре тĕрĕс çырасси. ТУ №7. Диктант. Сивĕ Мучи.

**Раздел 6: Глагол.** Глагол. Глагол пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем. Зоопаркра. Калава вĕçлесси. Çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем. Глагол улшăнăвĕ. Хальхи вăхăт. ĂÇУ №9. Изложени. Алăсем. Иртнĕ вăхăт. ТУ №8. Диктант. Ир тухакан кăмпасем. Пулас вăхăт. ĂÇУ №10. Ÿкерчĕк тăрăх калав туса çырасси.

**Раздел 7: Паллă ячĕ.** Паллă ячĕ. Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем.Паллă ячĕ улшăнни. Паллă ячĕ япала ячĕпе тата глаголпа çыхăнни. Çывăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем. Çулĕпе аслă çынсене хисеплесе чĕнесси. ĂÇУ №11. Изложени. Çĕмĕрт. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем.

**Раздел 8: 3 класра вĕреннине аса илсе çирĕплетесси.** 3 класра вĕреннине аса илсе çирĕплетесси.Сасăсемпе сас паллисем. Предложени. ТУ №9. Диктант. Пысăк пуху. Сăмах тытăмĕ. Пуплев пайĕсем.

## 4 класс

**Раздел 1: Кӳртĕм урок** Çĕрĕм-шывăм,чăваш çĕр шывĕ

**Раздел 2: Вĕреннине аса илесси**

Текст.Предложени.Сăмах . Тĕрĕслев ĕçĕ .Çырса илни.Кăвакарчăн. Сасăсем тата сас паллисем.Сыпăк.Пусăм. Хутшăну йали-йĕрки.Этикет.

**Раздел 3: Сăмах тытăмĕ татав пулавĕ.**

Пĕр тымарлă сăмахсем. Сăпайлăх сăмахĕсем. Сăмах аффикс хушăннипе пулни. Мăшăр сăмахсем.

**Раздел 4: Текст** Сăмахсене икĕ хут калани. Çыру тата пĕлтерӳ çырасси.

**Раздел 5: Предложенин пĕр йышши членĕсем**

Текстри предложенисен килĕшĕвĕ. Текст теми. Текстăн тĕп шухăшĕ. Текст тытăмĕ. Пĕр йышши членсем çинчен ăнлантарни

**Раздел 6: Пуплев пайĕсем**

Пуплев пахалăхĕ . Сăмахсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлани.

**Раздел 7: Япала ячĕ.**

Япала ячĕсен вĕçленĕвĕ.Падежсем. Хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсен вĕçленĕвĕ. Япала ячĕсене нумайлă хисепре вĕçлени. Япала ячĕсем çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни.

**Раздел 8: Паллă ячĕ.**

Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ,пулăвĕ. Палл ячĕсен тĕп тата танлаштаруллă степенĕсем. Паллă ячĕсен вăйлă степенĕ

**Раздел 9: Хисеп ячĕ.** Хисеп ячĕсен пĕлтерĕшĕ. Ĕç хучĕсем. Пĕлтерӳ çырасси.

**Раздел 10: Местоимени**

Местоимени пĕлтерĕшĕ.Сăпат местоименийĕсем. Уяв ячĕпе саламласси

**Раздел 11: Глагол**

Глаголăн пурлă тата çукла формисем. Глагол вăхăт тăрăх улшăнни. Глагол сăпат тăрăх улшăнни. Глагол хисеп тăрăх улшăнни. Хальхи вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ. Хальхи вăхăтри глаголсене çырасси. Иртнĕ вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ. Пулас вăхăтри глаголсен сăпатланăвĕ. Глагол çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни.

**Раздел 12: Вĕренӳ çулĕнче аса хывнине аса илесси**

Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ. Текст. Предложени. Пуплев пайĕсем. 4-мĕш класра вĕреннĕ пуплев пайĕсене аса илесси.

Тематика плане.

1 класс.

| № | Тема урока | часы |
|---|---|---|
| 1 | Шкула! | 1 |
| 2 | Тӑван кил-йыш. Сыхӑнуллӑ пуплев. | 1 |
| 3 | Шкул ачин кун йёрки. Вĕрену хатересем. Сыханулла пуплев. | 1 |
| 4 | Шкул ачин кун йерки. Сыханулла пуплев. | 1 |
| 5 | Керхи садра. Улма- сырла. Предложени. | 1 |
| 6 | Ача-пача ваййисем. Вылямаллисем. Самах. | 1 |
| 7 | Килти выльах-черлех: кайак-кешек. | 1 |
| 8 | «Сарак» юмах. Варманти йывассем: тискер кайаксем? Уса- хупа сасасем. Терминсем | 1 |
| 9 | Килти кайак-кешек. Весен кайаксем. Пусам. | 1 |
| 10 | [а] саса  А,а сас паллисем[у] саса  У,у сас паллисем | 1 |
| 11 | [а] саса  Аа сас паллисем н] саса Н,н сас паллисем | 1 |
| 12 | [л] саса  Л,л сас паллисем  [м] саса  М, сас паллисем | 1 |
| 13 | [т] саса  Т,т сас паллисем[п] саса  П,п сас паллисем | 1 |
| 14 | ш] саса  Ш,ш сас паллисем р] саса Р,р сас паллисем | 1 |
| 15 | [ы] саса Ы,ы сас паллисем[в] саса В,в сас паллисем | 1 |
| 16 | [х] саса Х, сас паллисем | 1 |
| 17 | [и] саса И,и сас паллисем. Хыта (семсе) сасасем: сыпаксем; самахсем.Хутӑш самах | 1 |
| 18 | Ее сас палли, [э] саса пелтереше.. [э] саса  Э, э сас палли[Е] саса . | 1 |
| 19 | [с] сасӑ; С,с сас паллисем[к] [к΄] сасӑсем; К,к сас паллисем | 1 |
| 20 | [ъ] саса, Ъ,ъ сас паллисем | 1 |
| 21 | Ç] сасӑ; Ç, ç сас паллисем Ç, ç сас паллисем | 1 |
| 22 | [Ч] сасӑ; Ч,ч сас паллисем Ч,ч сас паллисем | 1 |
| 23 | Семселĕх палли(ь | 1 |
| 24 | [Й] сасӑ; Й,й сас паллисем Йу]сыпӑк, Ю,ю сас паллисем | 1 |
| 25 | [Йа]сыпӑк, Я,я сас паллисем | 1 |
| 26 | Е,е сас паллисем [йэ] сыпӑка тата [э]сасса пĕлтерни | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 27 | [о] сасă, О,о сас паллисем | 1 |
| 28 | [б]саса, Б б сас паллисем[г] сасă, Г г сас паллисем[д] сасă, Дд сас паллисем | 1 |
| 29 | [з]саса, Зз сас паллисем | 1 |
| 30 | [ф]саса, Фф сас паллисем Уйаракан ъ тата Ь паллисем | 1 |
| 31 | [ж] саса, Жж сас паллисем | 1 |
| 32 | [ц] саса, Цц сас паллисем [щ] саса, Щщ сас паллисем | 1 |
| 33 | Вулав ханахавесем | 1 |

**Тематика плане**
**2 класс**

| № п/п | Урок теми | Ачасемпе ĕçлесси | Сехет шуче |
|---|---|---|---|
| | **Саса тата сас палли** | | |
| 1 | Предложени. Сăмах. Сасă тата сас палли | Предложенипе самах синчен 1-меш класра вереннине аса илесси. Сутсанталака, Таван сершыва юратма верентесси.<br>Сасасемпе сас паллисем синчен аса илесси. Варманти чер-чунсене сыхлама упрама верентесси. | 1 |
| 2 | Алфавит.<br>Илемле сыру. | Алфавит синчен аса илесси. Алфавит пурнасра мен тума кирлине анлантарасси. | 1 |
| 3 | Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. | Уса сасасемпе хупа сасасене аса илесси. Килти выльах-черлехсене юратмалли тата весене пахмалли синчен пелтересси. | 1 |
| 4 | **Тереслев диктанче** (1-мĕш кл. вĕреннине аса илни) | Сасасемпе сас паллисем синчен аса илесси. Вырас челхипе сыхану тытасси | 1 |
| 5 | «Терес сыратпар».<br>Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем | Хыта уса сасасемпе семсе уса сасасене аса илесси. Тупмалли юмахсемпе еслесси, вайаирттересси. Вырас челхипе сыхану тытасси | 1 |
| 6 | Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем. | Хупа сасасене аса илесси. Пахча симессем синчен каласу ирттересси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. | 1 |
| 7 | Хытă уçă сасăллă сăмахра -ю-, -я- çырасси. | Хыта тата семсе уса сасасене аса илесси. Кашни ачан дневникесене тирпейле тытмалли синчен каласу ирттересси. | 1 |
| 8 | Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси. | Уйаракан семселех пали (ь) синчен аса илесси. Тетрадьсем синче илемле сырмалли синчен каласу ирттересси. | 1 |
| 9 | Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни. | Варамман илтенекен хупа сасасем синчен аса илесси. Вырас челхинчи правиласене аса илесси. Пыл хурчесем синчен каласу ирттересси. Пирен тавралах, вырас челхи урокесемпе сыхану тытасси | 1 |
| 10 | Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене çырасси. | Янравла хупа сасалла самахсене аса илесси. Вырас челхипе сыхану тытасси. Хамар таврари халахан самахлахепе паллаштарасси. | 1 |
| 11 | Орфографи словаре. Самах диктанче. | Орфографи словарепе еслесси. | 1 |
| 12 | «Сасă тата сас палли» темапа **тереслев диктанче** | Диктант «Шкул ачи» е «Хура керкунне» (Таван челхе урокесем) | 1 |
| | **Самах.Япала яче** | | |
| 13 | Сăмахсене пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси. | Уса сасасем синчен аса илесси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. | 1 |
| 14 | Кам? Мĕн? ыйтуллă | Чере тата черемар япаласем синчен аса | 1 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | сămахсем. | илесси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. Сывлахла пулма, ана упрама верентесси. | |
| | Пер япалана пелтерекен сăмахсем. | Вырас, тутар челхинче пер япалана пелтерекен самахсене танлаштарасси. Вырас челхипе тата тутар челхипе сыхану тытасси. | |
| 15 | Çын ячĕсене, хушамачĕсене, ашшĕ ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа сырасси. | 1-меш класра вереннине аса илесси. Куршесемпе тусла пуранмалли синчен каласу ирттересси. | 1 |
| | Выльăх –чĕрлĕх ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | Килти выльах-черлехсене аса илесси. «Печек юлташсемпе» тусла пуранмалли синчен каласу ирттересси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси | |
| 16 | Сочинени. | Укерчеке санаса печек калав йеркелесси. | 1 |
| 17 | Хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк сас паллинчен пуçласа çырасси. | Хамар таврари ялсемпе хуласен ячесене аса илесси. Таван яла юратма, упрама верентесси. Курше ялсемпе тусла пуранма верентесси. | 1 |
| 18 | «Сăмах, япала ячĕ» темапа **тереслев диктанче** | Япала яче синчен аса илесси. Илемле сырмалли синчен каласасси. | 1 |
| 19 | Изложени. | Текста пайсем сине уйарма пелесси. Текста терес сырса пама веренесси. | 1 |
| | **Глагол** | | |
| 20 | Мĕн тăвать? Мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсем. | Есе пелтерекен самахсене аса илесси. Глаголсене уса курса сава сырма верентесси. Таван самах урокепе сыхану тытасси. | 1 |
| | Глаголсенче (ь) палли çырасси. | (ь)-палли синчен аса илесси. Есчен пулма верентесси. Кил-суртра атте-аннене пулашмалли синчен каласу ирттересси. | |
| 21 | Мĕн таваççĕ? ыйтури глаголсем. | Вырас челхинчи глаголсем синчен аса илесси. Вырас челхипе сыхану тытасси.Уроксене вахатла хатерлемелли синчен каласу ирттересси. | 1 |
| 22 | Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем. | Иртне вахатри, перрелле хисепри глаголсем синчен вереннине аса илесси. Пурнасра чеелех те кирле пулни синчен каласу ирттересси. Амартура пултарулла пулма верентесси. Физкультура урокепе сыхану тытасси. | 1 |
| 23 | Мен тавать? Мен туре? Ыйтури глаголсем. | Хальхи вахатри глаголсен ыйтавесене аса илесси. Иртне вахатри, перрелле хисепри глаголсем синчен вереннине аса илесси | 1 |
| 24 | Сочинени «Манан юлташ» | Глаголан ыйтавесене аса илесси. Кун йеркипе паллаштарасси, пурнасра сиреп чунла пулма верентесси | 1 |
| 25 | Йанашсене турлтни. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем. | Есе пелтерекен самахсене аса илесси. Глаголсене уса курса сава сырма верентесси. Таван самах урокепе сыхану тытасси. | 1 |
| 26 | Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем. | Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. | 1 |
| 27 | Изложени сырни. | Текста терес сырса парасси. | 1 |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | **Палла яче** | | |
| 28 | «Терес сыратпар»<br>Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. | Тереслев есенче туна йанашсене тупса анализлассиi. Япаласен паллисене санласси, ыйтавесене ответлесси. Менле? Ыйтури самахсем синчен вереннине аса илсе сиреплетесси. | 1 |
| 29 | Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. | Палласем тарах япалине тупасси. | 1 |
| | Çынна сăнлакан сăмахсем. | Ханахтарусем пурнасласси. Пуплеве аталантарасси. | |
| 30 | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем). | Самахсенчен предложенисем тавасси. Вереннине сиреплетесси. | 1 |
| | Пĕрешкел пĕлтерĕшл паллă ячĕсем (синонимсем). | Сене материалпа еслени. Вереннине аса илсе сиреплетни. | |
| | **Предложени** | | |
| 31 | Пуплеве предложенисем çине уйăрасси. | Текстри предложенисене уйарма веренни, весне панча, ыйту тата кашкару палли лартмаллине аса илесси. | 1 |
| | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕсĕн членĕсем. | Пуплеврен предложенисене уйарса илесси, теп членесене тупма ханахасси. | |
| 32 | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕсĕн членĕсем. | Пуплеврен предложенисене уйарса илесси, теп членесене тупма ханахасси. | 1 |
| | Предложени членĕсем хушшинчи çыхăну. | Теп членсене аялтан йерсем туртса пала туни, весен ыйтавне каласа пани. | |
| | Предложени членĕсем хушшинчи çыхăну. | Теп членсене аялтан йерсем туртса пала туни, весен ыйтавне каласа пани. | |
| 33 | Калуллă, ыйтуллă предложенисем. | Доска синче сырна текстра предложенисене уйарни, ана чарану паллисем лартса сырса илни. | 1 |
| | Кăшкăруллă предложенисем. | Предложени весенче кашкару палли лартасси. Кашкарулла предложенисене интонаципе терес вуласси. | |
| | **Вереннине аса илни** | | |
| 34 | Петемешле т**ереслев диктанче** | Диктант текстне илемле те терес сырма пелесси. | 1 |
| | «Терес сыратпар»<br>2-мĕш класра вĕреннине петемлетни | Вереннине аса илсе сиреплетесси | |

**Тематика планĕ,3 класс**

| № | Тема тата раздел ячĕ | Сехетсен шучĕ | | | ЭОР, ЦОР |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Пурĕ | Тĕрĕслев ĕсĕсем | Практика ĕсĕсем | |
| | | | | | |
| | • **Раздел 1. 1-меш,2-меш классенче вереннине аса илесси. 2 ч** | | | | |
| **1.1** | Текст. Предложени.Сасасе мпе сас паллисем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **1.2** | Ӳкерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | 2 | 0 | 2 | |
| | • **Раздел 2. Саса.Сас палли. 8 ч** | | | | |
| **2.1** | Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.2** | Диктант.Авăн уйăхĕ. | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.3** | Ч сасă умĕнчи л,н хупă сасăсен çемçелĕхне ятарласа палăртманни | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.4** | Изложени. Пиччĕшĕпе шăллĕ. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.5** | Ç,ч сас паллисем хыççăн ы е и çырасси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.6** | Вырăс чĕлхинчен çыру урлă йышăннă сăмахсенче б,г,д,ж,з,ф,ц,щ сас паллисем çырасси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.7** | Э,е,ю,я сас паллисемпе усă курма пĕлесси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.8** | Диктант "Туслăх". | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | 8 | 2 | 6 | |
| | • **Раздел 3. Предложени. 14 ч** | | | | |
| **3.1** | Предложени çинчен мĕн пĕлнине аса илесси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.2** | Калуллă предложенисем. Диктант "Çерçисем". | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| **3.3** | Ыйтуллă предложенисем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.4** | Хистевлĕ предложенисем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.5** | Изложени "Ватă тилĕ". | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.6** | Кăшкăруллă предложенисем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.7** | Предложенин тĕп членĕсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.8** | Предложенин кĕçĕн членĕсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.9** | Диктант "Кăмпа çумăрĕ". | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.10** | Ансăр тата анлă предложенисем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.11** | Пĕр-пĕр чĕр чуна сăнласа текст çырасси. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.12** | Предложени çинчен вĕреннине пĕтĕмлетни. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.13** | Тăванлăх сăмахĕсем.Çырса илни "Ват асатте уявĕ". | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.14** | Сочинени "Манăн асатте (асанне). | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | 14 | 2 | 12 | |
| | | | | | |
| | • **Раздел 4. Самах. 3 ч** | | | | |
| **4.1** | Çĕнĕ сăмахсем -çă(-çĕ),лăх(лĕх) аффикссем хушăнса пулни. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **4.2** | Изложени "Чаплă утарçă" | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **4.3** | Диктант "Кăмпара". | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | 3 | 1 | 2 | |
| | • **Раздел 5. Пуплев пайесем.Япала яче. 3 ч** | | | | |
| **5.1** | Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăвĕсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **5.2** | Изложени "Каюра" | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **5.3** | Диктант "Сивĕ мучи". | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | 3 | 1 | 2 | |
| | **Раздел 6. Глагол. 3 ч** | | | | |
| **6.1** | Глагол пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. Хальхи вăхăт. Иртнĕ вăхăт. Пулас вăхăт. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **6.2** | Изложени "Алăсем". | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **6.3** | Диктант "Ир тухакан кăмпасем" | 1 | 1 | 0 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | | 1 | 2 | |
| | • **Раздел 7. Палла яче. 1 ч** | | | | |
| **7.1** | Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ,ыйтăвĕсем. Паллă ячĕ улшăнни. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | Пĕтĕмпе раздел тăрăх | 1 | 0 | 1 | |

**4 КЛАСС**

| № п/п | Тема урока | Количество часов | | |
|---|---|---|---|---|
| | | Всего | Контрольные работы | Практические работы |
| 1 | Текст. Предложени.Сăмах | 1 | | |
| 2 | Пĕр тымарлă сăмахсем | 1 | | |
| 3 | Тĕрĕслев диктанчĕ №1Тăван чĕлхемĕрçĕм. | 1 | | |
| 4 | Текстри предложенисен килĕшĕвĕ | 1 | | |
| 5 | Пĕр йышши членсем çинчен ăнлантарни | 1 | | |
| 6 | Тĕрĕслев диктанчĕ №2 "Шăллăм | 1 | | |
| 7 | Сăмахсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлани | 1 | | |
| 8 | Изложени №3 "Будка тăрринчи йава" | 1 | | |
| 9 | Япала ячĕсен вĕçленевĕ.Падежсем | 1 | | |
| 10 | Тĕрĕслев диктанчĕ №3 "Юман" | 1 | | |
| 11 | Паллă ячĕсен пĕлтерĕшĕ,пулăвĕ | 1 | | |
| 12 | Паллă ячĕсен тĕп тата танлаштаруллă степенĕсем Паллă ячĕсен вайлă степенĕ | 1 | | |
| 13 | Местоимени пĕлтерĕшĕ.Сăпат местоименийĕсем | 1 | | |
| 14 | Глаголăн пурлă тата çуклă формисем Глагол вăхăт тăрăх | 1 | | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | улшăнни | | | |
| 15 | Тĕрĕслев диктанчĕ №4"Çутă çуркунне | 1 | | |
| 16 | Сăмах тытăмĕ тата пулăвĕ. Текст | 1 | | |
| 17 | Резерв урокĕ | 1 | | |
| ОБЩЕЕ КОЛИЧЕСТВО ЧАСОВ ПО ПРОГРАММЕ | | 17 | 0 | 0 |

**Приложени 2**

**Пуçламăш классенче чăваш чĕлхине вĕренекенсен пĕлĕвĕсемпе ăслай-хăнăхăвĕсене тĕрĕслесе хакламалли виçесем**

I класра çыру ĕçĕсене сăмахпа каласа çеç хаклаççĕ. Çырса илнинче ача 5 йăнăшран ытла туман пулсан, ку ĕç вăтам шутланать

Пĕрремĕш çул вĕренекенсен вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене куллен тĕрĕслесе пымалла, сăмах вĕççĕн хакламалла.

## ЧĔЛХЕНЕ ТИШКЕРМЕ ПĔЛНИНЕ ХАКЛАССИ

### Сăмахпа каласа хуравланине хакламалли виçесем

Сăмахпа каласа хуравлаттарни пуçламăш классенчи ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене хакламалли чи кирлĕ мелсенчен пĕри. Хуравăн çак енĕсене шута илмелле: а) вĕреннĕ материала туллин тата тĕрĕс каласа пани; ă) материала ăнланнин шайĕ; б) йĕркипе, çыхăнуллăн каласа пани, пуплев культури.

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача прог- раммăри материала ăнланса, туллин, тĕрĕс пĕлнине кăтартать, хăй каланине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать; сăмахсемпе предложени- сене хăй тĕллĕн тата тĕрĕс тишкерет, вĕрентӳçĕ сĕннĕ текстра ха- личчен вĕреннĕ грамматика пулăмĕсене, сăмахсене мĕнле çырмал- лине, предложенири чарăну паллисен сăлтавне тĕрĕс ăнлантарать, йĕркипе, çыхăнуллă каласа хуравлать, пуплев йăнăшĕсем пачах тумасть е 1 йăнăшран ытла тумасть пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен хуравĕ «5» паллăпа хакламалли виçесене тивĕçтерет, анчах вăл правилăсене çирĕплетме илнĕ тĕслĕхсенче 1-2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех е вĕрентӳçĕ пулăшнипе çăмăллăнах тӳрлетет; каласа панă чух 1-2 пĕчĕк йăнăш тăвать пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен материала пĕтĕмĕшле ăнланать, анчах туллин хуравлаймасть, вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç каласа пама пултарать; текста тишкернĕ чух уйрăм йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентӳçĕ ыйтусем панипе çеç тӳрлетет; правилăсене харкам тĕллĕн тĕслĕхсемпе çирĕплетсе параймасть, ку ĕçе вĕрентӳçĕ хушма ыйтусем парсан çеç пурнăçлайрать; çыхă- нуллă каласа параймасть, каласа панă чух темиçе йăнăш тăвать пулсан.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен материала пĕтĕмпех е унăн чи кирлĕ пайне пĕлмест, каласа панă тата текстпа ĕçленĕ чухне пысăк йăнăшсем тăвать, вĕсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе те тӳрлетеймест пулсан.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача вĕреннĕ материала пачах та пĕлмест пулсан.

Вĕреннĕ тĕп правилăсемпе тата теори материалĕпе çыхăннă хăнăхтарусенче тунă йăнăшсем уйрăмах пысăк йăнăшсем шут- ланаççĕ. Вĕсен шутне правилăсене ăнланмасăр, чуххăмăн каласа пани, хăйсен тĕслĕхĕсемпе çирĕплетменни, калаçупа çырура усă курма пĕлменни кĕреççĕ.

Паллаштарас тĕллевпе çеç программăна кĕртнĕ материала ача мĕнле пĕлнине тĕрĕслесе хаклама кирлĕ мар.

### Çыру ĕçĕсене (таса та илемлĕ çырни, диктант) хакламалли виçесем

Ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене кулленхи тата пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕçĕсем ирттерсе хакламалла.

**I класра** ачасен пĕлĕвĕсене, ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене хăнăх- тарусем пурнăҫлаттарса куллен тĕрĕслесе тăмалла. Букварь тапхăрĕнчи ҫыру ĕҫĕсем икĕ тĕрлĕ пулаҫҫĕ. Пĕрисем - вĕреннĕ пĕчĕк тата пысăк сас паллисене, сыпăксене, ансат, кĕске предложенисене ал ҫырăвне евĕрлесе пăхса ҫырасси. Ку ҫыру ĕҫĕсем ытларах чухне «Ҫыру тетрачĕпе» ĕҫлессипе ҫыхăнаҫҫĕ. Теприсем - пичетленĕ сăмахсене, предложенисене, текстсене ал ҫырăвне куҫарасси. Кун пек тĕрĕслемелли ҫыру ĕҫĕсем 1-3-мĕш чĕрĕксенче пĕрер, 4-мĕш чĕрĕкре иккĕ ирттермелле.

**II—IV классенче** куллен тата пĕтĕмĕшле ирттермелли тĕрĕслев ҫыру ĕҫĕсем шутне ҫырса илни, тĕрлĕрен диктант (вĕсемпе пĕрлех пуплеве тишкермелли хушма ĕҫсем те пулаҫҫĕ), изложени кĕреҫҫĕ.

I-IV классенче сочинени вĕрентмелле ҫеҫ ҫыртараҫҫĕ. Чĕлхе тишкерĕвĕпе ҫыхăннă хушма ĕҫсемпе пĕрле ирттернĕ ҫыру ĕҫне икĕ паллăпа хаклаҫҫĕ, пĕринпе - ҫырса илнишĕн, тепринпе - чĕлхе тишкерĕвĕшĕн.

II класран пуҫласа таса та илемлĕ ҫырассин хăнăхăвĕсене те тĕрĕслесех тăмалла. Хаклас критерисен шутне каллиграфии ҫак виҫисем кĕреҫҫĕ, сас паллисен ĕлкисене пăсмасăр, уҫăмлăн, пĕр пек виҫеллĕ чалăштарса ҫырни, вĕсен ҫӳллĕшĕ тан пулни; йĕрсен хулăнăшĕ, сас паллисем, сăмахсем хушшинчи хушă пĕр пекки, яланах пĕрешкел тата ҫителĕклĕ хăвăртлăхпа ҫырни.

**«5» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ачан ĕҫĕ каллиграфи нормисене тивĕҫтерет, ҫырура пĕр-икĕ пысăках мар ҫитменлĕх пулма пултарать.

**«4» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача ҫырăвĕ виҫесенчен пĕрне тивĕҫтермест (пĕрешкел чалăштарса ҫырман, сас паллисем, сăмахсем хушшинче пĕр пеклĕх ҫук т.ыт.те), 1-2 пысăках мар ҫитменлĕх пур.

**«3» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ҫырăвĕ каллиграфи виҫисенчен 1-2-шне тивĕҫтереймест (сас паллисене пĕрешкел чалăштарманни, хăш-пĕр сас паллисен ĕлки уҫăмлах марри, сас паллисен ҫӳллĕшĕпе хулăнăшĕ пĕрешкел марри т.ыт.те), 1-2 пысăках мар ҫитменлĕх пур.

**«2» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ачан ҫырăвĕ каллиграфи виҫисенчен чылайăшне тивĕҫтермест.

**«1» паллă ҫакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ҫырăвĕ питĕ тăрлавсăр, илемлĕ мар, унта тӳрлетнĕ, таса мар вырăнсем нумай.

**Пысăках мар йăнăшсем шутне ҫаксем кереҫҫе:**

1) хăш-пĕр сас паллисене тĕрĕс мар ҫырни;
2) пысăк тата пĕчĕк сас паллисене пĕр йĕр ҫинче ҫырманни;
3) хăш-пĕр сас паллисене тĕрĕс ҫыхăнтарманни;
4) йĕртен ҫӳлелле е аялалла тухса ҫырни;
5) ытлашши шултра е вĕтĕ ҫырни;
6) хăш-пĕр тĕлте сас паллисене пĕрешкел чалăштарса ҫырман- ни, сас паллисем, сăмахсем хушшинчи хушă пĕр пек пулманни;
7) хăш-пĕр сас паллисен тăрринчи паллăсене, ҫекĕлсене пăсса ҫырни.

Ача тунă чылай йăнăш ӳт-пӳ аталанăвĕпе ҫыхăннă пулсан, япăхрах ҫырнă ĕҫе «3» паллăпа хакламалла.

Ку виҫесемпе II класра таса та илемлĕ ҫырмалли уроксенче пурнăҫланă ĕҫсене тата II-IV классенче ятарласа ирттернĕ тĕрĕс- лев ĕҫĕсене хаклаҫҫĕ. Чăваш чĕлхи урокĕсенче таса та илемлĕ ҫырма вĕренмелли минутсенче ирттернĕ пĕчĕк ĕҫсене ятарлă паллăсемпе хакламаҫҫĕ.

**Тĕрĕслев еçесене** вăл е ку темăна вĕреннĕ май е вĕренсе пĕтер- сен ирттереççĕ. Вĕсен шучĕ темăна вĕренес йывăрлăхран килет.
Пĕтĕмĕшле тĕрĕслев ĕçĕсене ытларах вĕренӳ чĕрĕкĕ, çур çулĕ вĕ- çĕнче (анчах юлашки кунсенче мар!) ирттереççĕ.

**Асăрхаттарни:** пуçламăш классенче сочинени вĕренмелле çеç çыртараççĕ.

Диктант çыртарма (çырса илтерме) ытларах чухне çыхăнуллă текст илмелле. Текстсем литература чĕлхин виçисене пăхăнмалла, ачасен тĕнче курăмне анлăлатма, вĕсене ăслă- тăнлă, ĕрет-несĕп енчен йĕркеллĕ ӳссе çитĕнме пулăшмалла, вăл е ку класра мĕн вĕ- реннине тивĕçтермелле.

I класра çырса илмелли материалăн калăпăшĕ вĕренӳ çулĕ тăрш- шĕпе ерипен ӳссе пымалла. Малтанхи вăхăтра 2-3 пысăк тата пĕчĕк сас палли, 2-3 сыпăк, 2-3 сăмах е 2-3 сăмахран тăракан предложени çыртармалла. Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче çырса илмелли текст калăпăшĕ 15 сăмаха çитмелле.

<u>II-IV классенче диктант тата çырса илмелли текст калăпăшĕ çакăн пек пулмалла:</u>

| Классем | Чĕрĕксем | |
|---|---|---|
| | I II | III IV |
| II | 20-25 | 30-35 |
| III | 35-40 | 45-50 |
| IV | 50-55 | 60-65 |

Тĕрĕслев ĕçĕсем ирттермелли вăхăта çапларах уйăрмалла: I класра - 10-15 минут, II-IV классенче - 20-25 минут, хушма ĕçсемпе пĕрле: I класра - 25-30, II-IV классенче - 35-40 минут.

I класра çыру ĕçĕсене сăмахпа каласа çеç хаклаççĕ. Çырса ил- нинче ача 5 йăнăшран ытла туман пулсан, ку ĕç вăтам шутланать.

**II-IV классенче диктанта çак виçепе хакламалла:**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем пачах туман, орфограммăсене тӳрлетмен, каллиграфи виçисене пăхăнса (сас паллисен ĕлкисене уçăмлă, пĕрешкел чалăштарса т.ыт.те) çырнă, анчах уйрăм çитменлĕхсем (сиктерсе хăварнă сас паллисене кĕртсе лартни, сас палли ĕлкине тӳрлетни т.ыт.те) пур пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** çыру ĕçĕнче орфог- рафи йăнăшĕсем 2, пунктуаци йăнăшĕ 1 ытла мар, е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейлĕ çырнă, анчах темиçе çĕрте каллиграфи виçисене тивĕçтермен, пĕр-пĕр орфограммăна тӳрлетни пур пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем 6-ран ытла мар, диктантра (вариантсем) орфог- рафи йăнăшĕсем 3-рен 5-е çити, пунктуаци йăнăшĕсем 3 таран, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнса çырман тата тĕрлĕ орфограммăна тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** диктантра орфографи йăнăшĕсем 6, пунктуаци йăнăшĕ 3-4-ран ытла, ĕçе тирпейсĕр, каллиграфи виçисене пăхăнмасăр çырнă, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**Диктантра çаксене йăнăш тесе шутламалла:**

а) сăмаха орфографи правилисене пăсса çырни, сас паллисене сиктерсе хăварни, сас паллисене е сăмахсыпăкĕсене ылмаштарса лартни, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа улăштарни;

ă) вĕреннĕ правилăсене пĕлменнипе чарăну палли лартман е тĕрĕс мар лартнă пулсан.

**Диктантра ҫаксем йӑнӑш шутланмаҫҫӗ:**

а) ку таранччен вӗренмен орфографи тата пунктуаци правили- семпе ҫыхӑнман йӑнӑшсем (кун пек сӑмахсене класс хӑми ҫине ҫырса кӑтартмалла);

ӑ) предложени вӗҫӗнче пӗр хутчен пӑнчӑ лартмасӑр хӑварнӑ, тепӗр предложени пуҫламӑшне пысӑк сас паллипе ҫырнӑ пулсан;

б) текст шухӑшне улӑштармасӑр пӗр сӑмах вырӑнне тепӗр сӑмах улӑштарса ҫырнӑ пӗр тӗслӗх кӑна пулсан.

**Ҫаксене пӗр йӑнӑш тесе шутламалла:**

а) тӗрӗс мар ҫырнӑ сӑмах икӗ е темиҫе хутчен тӗл пулсан, ҫав правилӑпа ҫыхӑннӑ йӑнӑша тепӗр сӑмахра та тунӑ пулсан, вӗсене пӗр йӑнӑш тесе шутламалла:

ӑ) пысӑках мар икӗ ҫитменлӗхе (кӑлтӑка) пӗр йӑнӑш тесе шутламалла.

**Текста ҫырса илнине хакламалли виҫесем**

Текста ҫырса илсе пурнӑҫламалли ҫыру ӗҫӗсен шутне вӗренӳ кӗнекинчи тата класс хӑми ҫине ҫырса панӑ хӑнӑхтарусем кӗреҫҫӗ. Вӗсене ача мӗнле пурнӑҫланине ҫак таблицӑри виҫесене шута илсе ҫапларах хакламалла:

| Паллӑ- сем | Орфографипе пунктуаци йӑнӑшӗсен шучӗ | | |
|---|---|---|---|
| | **II класра** | **III класра** | **IV класра** |
| «5» | йӑнӑш ҫук | йӑнӑш ҫук | йӑнӑш ҫук |
| «4» | 1-2 йӑнӑш, 1 тӳрлетни | 1 йӑнӑш, 1 тӳрлетни | 1 йӑнӑш, 1 тӳрлетни |
| «3» | 3 йӑнӑш, 1 тӳрлетни | 2 йӑнӑш, 1 тӳрлетни | 2 йӑнӑш, 1 тӳрлетни |
| «2» | 4 йӑнӑш, 1-2 тӳрлетни | 3 йӑнӑш, 1-2 тӳрлетни | 3 йӑнӑш, 1-2 тӳрлетни |

**Словарь диктантне хакламалли виҫесем.** Словарь диктантне сӑмахсене тӗрӗс ҫырма вӗрентес тӗллевпе куллен ирттермелле.

Сӑмахсен пӗлтерӗшӗ ачасемшӗн ӑнланмалла пултӑр. Словарь диктанчӗн калӑпӑшӗ ҫакӑн пек пулмалла: II класра - 7 сӑмах, III класра - 10-11 сӑмах, IV класра - 12-14 сӑмах.

Словарь диктантне ҫак виҫесемпе хакламалла:

**«5» паллӑ** - диктантра 1 йӑнӑш та ҫук пулсан;

**«4» паллӑ** - диктантра 1 йӑнӑш, 1 тӳрлетни пулсан;

**«3» паллӑ** - диктантра 2 йӑнӑш, 1 тӳрлетни пулсан **«2» паллӑ** - диктантра 3-5 йӑнӑш пулсан.

**Изложенисемпе сочиненисене хакламалли виҫесем.** Вӗ-
ренекенсене шухӑша ҫыхӑнуллӑн йӗркелесе ҫырма хӑнӑхтарас тесе II-IV классенче вӗрентсе ҫыртармалли сочиненисем кашни 2 эрнере пӗрре ирттермелле, кашни ӗҫе ҫыртарма пӗрер сехет уйӑрмалла.

II-III классенче тӗрӗслев изложенине вӗренӳ ҫулӗ вӗҫӗнче пӗрер, IV класра - пурӗ 2 ирттермелле. Изложени тексчӗн калӑпӑшӗ дик- тантран 15-25 сӑмах ытларах пулмалла.

II класра изложени тексчӗ калуллӑ, ансат пулмалла. III-IV классенче калуллӑ текста сӑнлав тата уйлав элеменчӗсем кӗртеҫҫӗ. Текстсем ачасене ӑслӑ-тӑнлӑ, таса чун-чӗреллӗ ӳссе ҫитӗнме пулӑ- шаканнисем пулмалла.

Сочинени калăпăшĕ сахалтан та II- III классенче 0,5-1 страница (8-9 предложени е 55-60 сăмах), IV класра 10-11 предложени (65-75 сăмах) таран пулмалла.

Сочинени теми пурнăçпа таччăн çыхăнтăр, ачасен кулленхи вĕренĕвне, ĕçне-хĕлне çывăх, вĕсене ăнланмалла пултăр, текста çыхăнуллă йĕркелесе çырма пулăштăр.

Изложение хаклană чухне вĕренекен ача автор текстне туллин (е кĕскен), тĕрĕс (факт йăнăшĕсемсĕр), шухăша пĕрин хыççăн тепри- не çыхăнуллă йĕркелесе, литература чĕлхин тата илемлĕ те тĕрĕс çырассин виçисене пăхăнса çырнине шута илмелле.

Сочинение хакланă чухне, кунсăр пуçне, текста темăпа тата планпа килĕшӳллĕ çырнине, пуплев пуянлăхĕпе илемлĕхне (сă- махсемпе, сăмах майлашăвĕсемпе, эпитетсемпе, танлаштарусемпе меллĕн усă курнине, предложенисене тĕрĕс йĕркеленине т.ыт.те), уçăмлăн, таса та хитре çырнине асра тытаççĕ.

Орфографипе пунктуаци йăнăшĕсене шута илнĕ чухне диктанта хакламалли виçесене пăхăнмалла.

Пултарулăх ĕçне (изложени тата сочинени) II-IV классенче пĕр паллăпа хакламалла;

IV класра, сочинени калăпăшне тата ачасен çыхăнуллă çырăвĕн аталанăвне кура, икĕ паллăпа палăртмалла: пĕри - шухăшпа пуп- лев пуянлăхĕшĕн, иккĕмĕшĕ - сăмахсемпе предложенисене тĕрĕс çырма пĕлнĕшĕн.

**Пĕтĕмĕшле илсен, юложенипе сочинение II-IV классенче çапла хакламалла:**

**«5» паллă** - автор текстне тĕрĕс тата çыхăнуллă çырса кăтартнă (изложени), шухăш темăпа килĕшӳллĕн, çыхăнуллăн аталанса пы- рать, факт йăнăшĕсем çук, сăмах йышĕ пуян, пуплев тĕлĕшĕнчен текста тĕрĕс те палăртуллă хайланă пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем çук, 1-2 тӳрлетни пулма пултарать.

**«4» паллă** - автор текстне çителĕклĕ таран туллин çырса кă- тартман (изложени), темăна уçса панă, анчах уйрăм вырăнсенче шухăш çыхăнăвĕ татăлса кайни, тĕрĕсех мар çырни тата пуплев çитменлĕхĕсем пур. Пуплев тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпе 3 йăнăшран ытла мар, содержанипе тунă йăнăшсем 3 таран пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: 2 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕнчен ытла мар е 1 орфографи, 2 пунктуаци йăнăшĕ тунă, пĕр-пĕр орфог- раммăна тӳрлетни пур пулсан. (Вĕреннĕ правилăсемпе тунă йăнăш- сене çеç шутламалла.)

**«3» паллă** - автор текстĕнчен кăштах пăрăннă (изложени), темăпа килĕшӳллĕ тата çыхăнуллă çырман, 2-3 предложение тĕрĕс- ех йĕркелеймен, сăмах йышĕ чухăн, пуплев тĕлĕшĕнчен çитменлĕх- сем пур, шухăш аталанăвĕнче (содержанире), текста йĕркелессинче тата пуплевре йăнăшсем пĕтĕмпе 5 таран пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: 3-5 орфографи йăнăшĕ таран, вариантсем: 3 орфографи, 2-3 пунктуаци йăнăшĕ, е 4 орфографи, 2 пунктуаци, е 5 орфографи, 1 пунктуаци йăнăшĕ тунă, тĕрлĕ орфограммăсене тӳрлетни 1-2 пулсан.

**«2» паллă** - ĕçе тема тăрăх çырман, автор текстĕнчен чылай пăрăнса кайнă (изложени), текста тĕрĕсех мар ăнланнă вырăнсем (факт йăнăшĕсем) пур, йĕркеллĕ, çыхăнуллă çырман, уйрăм пайсем хушшинче çыхăнулăх çук, сăмах йышĕ чухăн. Текста тата пуплеве йĕркелес енĕпе 6 çитменлĕхпе йăнăшсем пур пулсан.

Тĕрĕс çырнăшăн: орфографи йăнăшĕсем 6-ран, пунктуаци йăнă- шĕсем 3-4-ран ытла, 3-5 тӳрлетни пур пулсан.

**Асăрхаттарни:** пултарулăх ĕçĕсене хакланă чухне таса та илем- лĕ çырнине, каллиграфи виçисене еплерех пăхăннине (диктанта пахаланă чухнехи пекех) шута илсе хакламалла